Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

101 (7843) № * Юн кун, 2010 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 1-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшаççĕ

Çамрăк механизаторсем



***«Восток» ял хуçалăх предприятине çитсен нумай чухне хуçалăх уйхирĕсемпе производство объекчĕсенче çамрăксем вăй хунине асăрхама пулать. Хăйсене хуçалăх ертӳçисем тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса пани çамрăксене вырăнта тытса тăрать те. Çакна эпĕ Сергей Валериянович Наумовпа Дмитрий Андреевич Быков (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) çамрăк механизаторсемпе тĕл пулса калаçсан та ăнланса илтĕм. Вун пĕр çул хуçалăхра тĕрлĕ тракторпа ĕçленĕ çамрăксем кăçал та ĕçре хăйсен ятне ямарĕç. Акрĕç-лартрĕç, вырчĕç-пуçтарчĕç, кĕр çитсен пысăк лаптăк çинче çĕртме сухи туса хăварчĕç. Ĕçсем вĕçленсен çамрăк механизаторсем уй-хир ĕçĕсене хутшăннă ял хуçалăх техникине управа тирпейлĕ лартассипе тăрăшрĕç.***

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

***Муркаш районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕ ыйтнине тивĕçтерсе оперативлă служба ĕçĕ-хĕлĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕн 2010 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнчи 848 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Сергей Анатольевич ИВАНОВА**, Муркаш районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕн милици майорне;

– **Александр Юрьевич СТЕПАНОВА**, Муркаш районĕ тăрăх шалти ĕçсен пайĕн милици аслă лейтенантне.

Ял тăрăхĕсенче

## Бюджет проекчĕ паллă

Йывăрлăхсемпе çăмăллăхсене ылмаштарса 2010 çул иртсе пырать. Ял тăрăхĕсемшĕн те кая юлмасăр татса памалли ыйтусем сахал мар пулчĕç кăçал. Анчах пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Çитес çулхи ĕç-хĕл пирки те шутламалла. Çак ыйтусемпе иртнĕ тунти кун, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче, депутатсен Çатракасси ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн ларăвĕ иртрĕ. Унта пухăннисем малтанах кăçал пурнăçланă тата çулталăк вĕçлениччен ĕçсем пирки ыйту пăхса тухрĕç. Кунта ялсенчен ăпăр-тапăр илсе тухассине йĕркелесси малта пулчĕ. Депутатсем пĕр шухăшлă пулса йăлари каяша ялсенчен черетпе илсе тухассине йĕркелеме йышăнчĕç.

Ял тăрăхĕн 2011 çулхи бюджетне сӳтсе явса депутатсем хăйсен сĕнĕвĕсене пурнăçлассине мала тăратрĕç. Кунта ялсене тирпей-илем кĕртесси, урамсене асфальт çулсем сарасси, çуллахи вăхăтра шыв ыйтăвне татса парассипе ĕçлесси, пушар машинисене юсавлă ĕçлеттерессипе мерăсем йышăнасси, ялти культурăна аталантарасси тĕп вырăнта пулчĕç.

– Çулсем тăвасси çине тĕп тимлĕх уйăрмалла. Автомашинăпа ял патне çитсен урама кĕрейменни никама та чыс тумасть, – терĕ çулсем тăвасси çине тĕп тимлĕх уйăрса Г. Яковлев депутат.

Депутатсем пĕрле пулса бюджет проектне ырларĕç.

**А. БЕЛОВ,**
**Çатракасси ял тăрăхĕн депутачĕ.**

Конкурс

## Кăçалхипе улттăмĕш хут

Çак кунсенче шкул хаçачĕсен хуласенчи «Школа-пресс-2011» уçă конкурсĕ старт илчĕ. Яланхи пекех ăна «Грани» издательство çурчĕ Çĕнĕ Шупашкар администрацийĕн вĕрентӳ пайĕпе тата ачасемпе çамрăксен пултарулăх аталанăвĕн А. Андрианов ячĕпе хисепленекен центрĕпе пĕрле ирттерет.

Кăçалхи ăмăрту улттăмĕш пулать. Унта хутшăнас тесен шкул хаçачĕсен редакцийĕсен 2010 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчен кая юлмасăр «Грани» хаçат редакцине (Çĕнĕ Шупашкар хули, Советская урам, 14 а çурт) кăçал пичетленсе тухнă хаçатсен виçĕ номерĕнчен кая мар тăратмалла. Унчченхи пекех эпир чи лайăх шкул хаçатне кăна мар, кунпа пĕрлех «Шкул хаçачĕн чи лайăх дизайнĕ», «Чи лайăх иллюстраци материалĕ», «Шкул учителĕ пирки чи лайăх материал» (Учитель çулталăкĕн итогĕсемпе) номинацисенче те çĕнтерӳçĕсене палăртăпăр.

«Школа-пресс-2011» çĕнĕлĕхĕсем вĕсем – «Чи лайăх шкул корреспонденчĕ» тата «Шкул хаçачĕн чи лайăх интернет-версийĕ» номинацисем. Вĕсенчен пĕрремĕшĕнчи тĕп требованисенчен пĕри – шкул хаçатĕнче тĕрлĕ жанрпа çырнă 4 материалтан кая мар пичетлесе кăларни.

«Грани» сайтĕнче «Школа-пресс-2011» банер уçнă. Унта пĕтĕм информаципе тата конкурс положенийĕпе паллашма май пур.

«Школа-пресс-2011» итогĕсене Çĕнĕ çулхи каникулсем хыççăн çийĕнчех пĕтĕмлетме палăртнă. Çĕнтерӳçĕсене наградăласси Чăваш пичечĕн кунĕнче (январь уйăхĕн виççĕмĕш вырсарни кунĕнче) пулать.

**«Грани» издательство çурчĕ.**

Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ РАШТАВ УЙĂХĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ ВĂТАМ СĂВĂМ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(килогрампа).**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 7,3 | -0,1 |
| «Восток» | 6,3 | -2,2 |
| «Герой» | 9,4 | -0,1 |
| Ильич яч. хис. | 9,1 | -2,1 |
| «Оринино» | 10,7 | -3,1 |
| «Передовик» | 7,0 | 0,8 |
| «Свобода» | 8,2 | -1,9 |
| Суворов яч. хис. | 12,6 | -1,2 |
| «Ударник» | 9,5 | -0,2 |
| Чапаев яч. хис. | 4,2 | -2,4 |
| Чкалов яч. хис. | 9,7 | 1,8 |
| «Путь Ильича» | 4,4 | – |
| АПФ «Колос» | 12,0 | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **9,0** | **-1,0** |

Пушар хуралĕ асăрхаттарать

## Мунча ăшши тата тимлĕх

Хĕлĕн пĕрремĕш уйăхĕ пуçланнă тĕле район территорийĕнче 33 пушар алхасрĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăрти шайрах. Апла пулсан тимлĕх пирки самантлăха та манмалла мар. Ахальлĕн...

Чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнче пĕр сехет те 20 минутра Муркашри пушар надзорĕн уйрăмне Москакасси ял тăрăхĕнчи Уйкас Хачăкри уйрăм çыннăн кил хуçалăхĕнче пушар тухни пирки пĕлтерӳ çитрĕ. Мунча çунать иккен. Оперативлă йышăнупа пушарпа кĕрешме çийĕнчех тухнă техника «хĕрлĕ автан» çулне самантрах пӳлет. Анлă сарăлайман пушарта пĕрлехи вăйпа пурăнмалли çуртра, кил хуçалăхри ытти хуралтăсене пĕтĕмĕшле сыхласа хăвартăмăр. Инкек сăлтавне тĕпчени куç умне кил хуçисем ăнсăртлăх пирки маннине кăтартса пачĕ: мăрье юсавсăр пулнă.

Çакнашкал сăлтавпах чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче 9 сехетре Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Иштерекре мунчана вут хыпса илет. Пушар хуралĕ вăхăтра çитнипе кăна кунта та «хĕрлĕ автана» инçе сарăлма памарăмăр.

Паян манăн çакна палăртас килет. 2009 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа 2010 çулхи пуш уйăхĕччен районта кăмака е мăрье юсавсăр пулнипе 13 мунча çуннăччĕ. Кăçал пулнă икĕ тĕслĕх те мунча хутакансен асăрханулăха çӳллĕ шайра тытмалли пирки систерет.

**И. СМИРНОВ, патшалăх**
**пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Килти хушма хуçалăх ĕçлĕ тăвать, тупăш парать

Паянхи саманара президентсене те пурăнма çăмăл мар. США президенчĕн юратнă мăшăрĕ Мишель Шурă çурт картишĕнче йăран туса симĕс салат ӳстерчĕ. Кирек епле пулсан та çемье бюджечĕшĕн пулăшу.

Пирĕн çĕр-шывра вара килти хушма хуçалăхсăр инçе каяймăн. Çĕр улмипе купăсти, суханĕпе кишĕрĕ килти пахчаран, сĕт-турăхĕпе аш-пăшĕ те хамăр алăпа тунисемех.

Сывлăхшăн та усăллă. Ара «химиă» сапман, темĕн тĕрлĕ активлă биологи хутăшĕсемпе тăрантарман. Укса-тенкĕ те перекетленет. (Ĕç укçипе темĕн туянмалла ĕнтĕ?!)

Укса перекетленет çеç мар, килти хушма хуçалăх паян нумайăшне ĕçлĕ тăвать, тăрантарать. Ĕçлеме пĕлекеннисем тупăш та илеççĕ.

Паян Раççейре 22,8 миллион килти хушма хуçалăх шутланать. Çĕршыври мĕн пур ял хуçалăх продукцийĕн 50 процентне вĕсенче туса илеççĕ. Кашни ялти çемьере 3-4 çын тесе шутласан патшалăхра пурăнакансен çуррине хушма хуçалăх тăрантарать.

Халĕ вара хамăр района таврăнар. Ял çыннисем 10156 пуç мăйракаллă шултра выльăх усраççĕ. Районти мĕн пур выльăх хисепĕн 65,1 процентне танлашать çак кăтарту. Ĕнесем – 7177 пуç (76,4 процент). Ентешсем çавăн пекех 4591 сысна (30,2 процент), 9661 сурăхпа качака (97,6 процент), 67,2 пин чăх-чĕп (18,1 процент) тытаççĕ.

Çапла вара ял çыннисем хăйсене валли çеç мар, сутлăх та аш-какай, сĕт-турăх туса илеççĕ. Килти пахчаран пухса кĕртнĕ çĕр улмие, купăстана, сухана, кишĕре тата ытти те кам шутласа кăларĕ. Улми-çырли пирки те манар мар.

Паллах ĕçлемесĕр пулмасть. Ĕçрен хăраман ял çыннине патшалăхăн ытларах пулăшмалли те куç кĕрет. «Килти хушма хуçалăх çинчен» Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе çичĕ çул иртрĕ. Вăл ял çыннине килти саккунлă ĕçлеме май туса пачĕ. Анчах паян çакă çителĕксĕр. Ял çыннисем те паян ăратлă выльăх, пахалăхлă вăрлăх туянма патшалăхран пулăшу кĕтеççĕ. Кун пек тĕслĕх кӳршĕри Тутарстанра вăя кĕнĕ те.

***Вулакансене ку ыйтупа хăйсен шухăшне пĕлтерме ыйтатпăр.***

***Паянхи номерте вара килти хушма хуçалăх ыйтăвĕсемпе çырнă материалсене ытларах пичетлес терĕмĕр. Малашне ку темăна анлăлатса пырăпăр. Шăмат кунхи номерсене тимлĕрех пăхăр.***

Инкек

## Асăрханулăх чăрмантармĕ

Сивĕсем пуçланчĕç. Çул çинче пăрлак. Çавна май водительсен асăрханулăхпа тимлĕх пирки пĕр самантлăха та манма кирлĕ мар.

Акă çав сăлтавпах 2010 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче М-7 Мускав–Уфа çул çинче инкек пулса иртрĕ. Шупашкарта пурăнакан А.Г. Яковлев çулпа пынă чухне тепĕр енне тухса кайнă, КамАЗ автомашинăпа çапăннă. Хăйĕн сывлăхĕшĕн ăна ытлашши темĕнех пулман пулин те, 2003 çулта çуралнă Анастасия хĕрĕшĕн инкек синкерлĕ вĕçленнĕ. Вăл çавăнтах вилсе кайнă. Мĕншĕн тесен автомашинăна вут-çулăм хыпнă.

Çавăнпа та водительсене хальхи тапхăрта кăна мар, ытти чухне те çулсем çинче тимлĕ пулма, çул-йĕр правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама ыйтнă пулăттăм.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн аслă лейтенанчĕ.**

# «Пире хӳтлĕх кирлĕ»

**Декабрĕн 3-мĕшĕ – Инвалидсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ**




***Ĕнер, чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче, «Сывлăх» ФСК-ра Инвалидсен пĕтĕм тĕнчери кунне халаллана анлă пуху пулса иртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А.Иванов пухăннисене район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, тивĕçлисене Тав çырăвĕ парса чысларĕ.***

***Çавăн пекех инвалидсене паракан çăмăллăхсем пирки анлă калаçу пулса иртрĕ. Вĕсем пирки РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тухса калаçрĕ.***

***Кунтах ал ĕç конкурсне йĕркеленĕ, спорт ăмăртăвĕсенче те питĕ маттур пулчĕç пухăннисем.***

Çак кун пур çĕрте те инвалидсене халалласа йĕркеленĕ мероприятисем, калаçусем пулса иртеççĕ. Çакă вара инвалидсемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Паянхи куна пирĕн районта 2355 инвалид пурăнать, вăл шутра пĕрремĕш ушкăнрисем – 429, иккĕмĕш ушкăнра вара 883 çын шутланать, виççĕмĕш ушкăнра – 909 инвалид, инвалид ачасем 134-ăн. Тинкеререх пăхсан вара вĕсен хисепĕ пĕчĕкех те мар, шăписем кашнин хăйне май. Эпĕ Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин вырăнти организацийĕн ертӳçи пулнă май чылайăшĕ патне çитсе куртăм, хăшĕсен вара шăписем чăн та питĕ йывăр. Тĕрлĕ синкерлĕхе пула ал-урасăр юлнисем, ачасем тĕрлĕ чире кайса шкула каяйманнисем те пур.

Пирĕн общество членĕсем питĕ активлă çынсем, пурнăçа тăвата стена хушшинче кичеммĕн ирттермеççĕ. Вĕсем район тата ун тулашĕнчи тĕрлĕ мероприятисене тăтăшах хутшăнаççĕ, малти вырăнсене çĕнсе илеççĕ. Акă республика шайĕнчи «Инвалид çемйи – наци пуянлăхĕ» социаллă программăна хутшăнса Пушкаревсен çемйи малтисен ретне тухрĕ. Çавăн пекех спортăн тĕрлĕ енĕпе туслă пирĕн çынсем, тăтăшах малти вырăнсене çĕнсе илеççĕ, хăйсене тĕрлĕ енлĕ аталантарса пыраççĕ.

Эпир хамăр туслă коллективпа тĕрлĕ вырăнсене экскурсие çитсе курма майсем тупатпăр. Чăвашăн мухтавлă ывăлĕ А.Г.Николаев çуралса ӳснĕ тăрăхра пулса куртăмăр. Çулла вара эпир Каршлăх тăрăхне те çитсе килтĕмĕр. Унти мăнастирте тата интернатра пулса куртăмăр. Тĕрĕссипе вара эпир сывлăх хавшаккине пăхмасăрах чылай ĕçе хутшăнатпăр, алă усса лармастпăр. Пирĕн район организацийĕн опычĕпе ытти районсенчи организацисем те паллашаççĕ. Акă пулă тытас ăмăртăва та ирттерсе пăхрăмăр, çакă пирĕн ĕçри çĕнĕлĕх пулчĕ.

Пире кулленхи ĕçре вара район администрацийĕн, социаллă хӳтлĕх пайĕн, Раççейри Пенси фончĕн ĕçченĕсем пулăшса пыраççĕ. Пирĕн обществăлла организаци тĕл пулусем тăвать, ял тăрăхĕсенчи пуçламăш организацисен ертӳçисене пухса тĕрлĕ калаçу ирттерет. Калаçмалли, сӳтсе явмалли питĕ нумай пирĕн. Тĕл пулусене районти яваплă ĕçченсене чĕнетпĕр. Вĕсем пире тĕрлĕ çăмăллăхсем, саккунсем пирки ăнлантарса параççĕ. Хăш чухне вара пирĕнпе ăшшăн калаçни те чĕре сиплĕхĕ пекех туйăнать.

Çапла вара мероприятие укçа-тен-кĕсĕр те ирттерме çук. Кун пек чухне Муркаш райповĕн, Муркашри сĕт-çу завочĕн, Муркашри коммуналлă хуçалăхăн, «Росгосстрах» Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн, Муркашри пасар тата «Визит» суту-илӳ лавккин ертӳçисем пире ăнланаççĕ тата пулăшса пыраççĕ. Çавăнпа та манăн вĕсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Çавăн пекех Александр Нестерович Кузнецова та ырăпа асăнатăп. Ĕçĕрсем сирĕн яланах ăнса пыччăр.

Эпĕ вара сăмахăма вĕçленĕ май сире пурне те çирĕп сывлăх сунатăп. Сывлăх пирĕн чи хаклă тупра вĕт.

**А. НИКОЛАЕВА,**
**пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин вырăнти организацийĕн ертӳçи.**

**Çĕнĕ кĕнеке**

# Ялсен историйĕпе кăсăкланакансем валли

Пирĕн ентеше, паллă ăсчаха, филологи ăслăлăхĕсен докторне Леонид Павлович Сергеева хамăр районта кăна мар, республика тулашĕнче те пĕлекен сахал мар. Чĕлхе ыйтăвĕсемпе пичетленнĕ тата пичетленмен ăслăлăх ĕçĕсем унăн 600–700 те яхăн.

Тĕрĕк пĕлӳлĕхĕпе финно-угроведенишĕн пĕлтерĕшлĕ ĕçсем шутне нумай пулмасть кун çути курнă «Муркаш районĕнчи ял ячĕсем» словаре те кĕртмелле. Л.П. Сергеев, Т.Н. Сергеева, Н.В. Матвеева çак ĕçре Муркаш районĕнче вырнаçнă ял ячĕсен пулăвне, аталанăвне, ку е вăл ял ячĕ ăçта, мĕнле çăл куçра çырăнса юлнине сăнласа кăтартнă.

Тăван чĕлхепе кăсăкланакан çамрăксем валли çырнă çак словарь çакăн пек пайсенчен тăрать: Ум сăмах, Словарь, Вырăсла-чăвашла словарь (ял ячĕсем), Словарьте усă курнă ономастика терминĕсем, Словарьте тĕл пулакан кĕскетнĕ сăмахсем. Кĕнекере Муркаш районĕнчи пысăк ялсен вырнаçăвĕпе, вăрмансемпе юхан шывсен вырăнĕпе, сарнă çулсен серепипе паллаштаракан карта та вырăн тупнă.

«Муркаш районĕнчи ял ячĕсем» кĕнекен ум сăмахĕнче паллă ăсчах пире «тавраси географи объекчĕсен (ялсемпе хуласен, çырмасемпе кӳлĕсен, вăрмансемпе уй-хирсен, сăрт-тусемпе улăхсен) ячĕсене тĕпчесе вĕрентекен наука» пуррине, ăна топонимика тенине вуласа пĕлетпĕр, Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи географи объекчĕсен ячĕсемпе паллашма пултаратпăр. Тимлĕ тĕпчевçĕ Муркаш тăрăхĕнчи ялсен шучĕ мĕнле улшăнса пынине те асăрханă. 1968 çул тĕлне ку тăрăхра 179 ял çеç сыхланса юлнă. 1948 çулхипе танлаштарсан 24 ял ячĕ «çухалнине» палăртать.

Л.П. Сергеев, Т.Н. Сергеева, Н.В. Матвеева тĕпчевçĕсем ял историйĕпе çыхăннă кашни халапах ним улăштармасăр çырса илме, топонимсен пĕлтерĕшĕ чĕлхепе этнографи, историпе археологи ăслăлăхĕсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртаççĕ. Ăсчахсем ял ячĕсем ку тăрăхра чăвашсем куçса киличченхи вăхăтранах – çармăссем пурăннă тапхăртан – пуçласа XX ĕмĕрччenех йĕркеленсе пынине палăртнă.

Кĕнекене чăвашла калăпланă май авторсем тĕп сăмах вырăнне ялăн чăвашла ятне панă, унтан скобкăра вырăсла ятне вырнаçтарнă, ял ячĕсене алфавит йĕркипе майлаштарнă. Словарьпе кăсăкланакансем ялсем хăш ял тăрăхне кĕнине те пĕлме пултараççĕ.

Енчен те кам та пулин ялăн вырăсла ятне анчах пĕлет, анчах унăн çав ялăн чăвашла ятне, унăн кун-çулне пĕлмелле пулсан, вăл ăна «Вырăсла-чăвашла словарьте» шыраса тупма пултарать.

Хушма информаци тĕп текста ăнланса илме ан чăрмантартăр тата текст кĕскерех пултăр тесе нумай чухне тĕрлĕ кĕскетӳсемпе усă курма тивет. Вулакана вĕсем мĕне пĕлтернине «Словарьте тĕл пулакан кĕскетнĕ сăмахсем» пай уçса парать.

Çак тĕпчев Чăваш Республикин тĕрлĕ районĕсенчи ял ячĕсене ăнлантаракан пĕрремĕш кĕнеке пулин те, «Муркаш районĕнчи ял ячĕсем» словарĕн пĕлтерĕшĕ чĕлхе пĕлĕвĕшĕн, унăн ономастика пайĕшĕн, тăван чĕлхепе, Муркаш районĕн кун-çулĕпе кăсăкланакансемшĕн чăннипех те пысăк.

**А. КУЗНЕЦОВ,**
**филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Раççей ăслăлăх академийĕн Тухăç тĕпчевçисен пĕрлĕхĕн пайташĕ, Раççейри тĕрĕк пĕлӳлĕх комитечĕн хирти тĕпчевсен çум комиссийĕн пайташĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн чĕлхе пĕлĕвĕн пайĕн ăслăлăх аслă ĕçченĕ.**

# «Хам ĕçĕмсемпе киленетĕп»

**Шăпа**

***– Шурă пусма çине хĕрлĕ, сарă тĕслĕ çипсемпе тирсе туртатăп та илемлĕ чечек пуçĕсем пулса лараççĕ, ун пек чухне чунăм манăн хăпартлансах каять. Ара эпĕ те илемлĕх тĕнчине туятăп-çке! Е тата сăрăсем илетĕп те сарă хĕвеле, вĕççĕр-хĕрсĕр кăвак пĕлĕте ӳкеретĕп. Кун пек чухне вара аякка-аякка вĕçекен тăрна евĕр малтан мала каяс килет манăн, ара тантăшсем тахçанах тĕнче тăрăх саланнă-çке, - терĕ те çирĕм çултан иртнĕ хĕр, унăн куçĕ кăшт кăна шывланчĕ.***

Эпĕ сăмахăма Оринин ял тăрăхне кĕрекен Чамăш ялĕнче çуралса ӳснĕ Алена Александровна Волковăпа пуçартăм. Çапла, пĕчĕк чухне хăйăр купи çинче выляна тусюлташсем, пĕрремĕш хут шкул тенкелĕ çине ларнă хĕр-тантăшĕсем пурнăç çулĕ çине тăма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Аленăн шăпи вара тĕрлĕ сăлтавсене пула ытти ачасенниччен кăшт кăна урăхларах килсе тухрĕ.

...Волковсен кил-çуртĕнче пысăк савăнăç, çемьере виççĕмĕш ача кун çути курать. Анчах та вăхăт кайнă çемĕн телей курма килнĕ пепке аталанăвĕнче амăшĕ хăш-пĕр кăлтăксене асăрхать. Çапах та пĕчĕк хĕр малаллах тăлпăнать, ӳснĕ çем ӳсет.

– Пĕрремĕш сăмахсем, пĕрремĕш утăмсем, ман еннелле туртăнакан черченкĕ алăсем, ман çинелле пăхакан чăр-чăр куçсем... – йăлт паянхи пекех астăватăп-çке çав самантсене. Унăн малашлăхĕ вара мана халĕ питĕ шухăшлаттарать, – тет Римма Петровна тарăн шухăша кайса. Канăçа çухатнă амăшĕ тăван хуçалăх правленинче вăй хурать. Çемьере тата ял-йыш умĕнче вăл пысăк хисепре.

–Анне – маншăн чи хакли. Эпĕ ăна тен хăшпĕр самантра кӳрентеретĕп те пулĕ, уншăн та, пуриншĕн те вăл мана каçартăрах ĕнтĕ, – тет çирĕмрен иртнĕ хĕр амăшĕшĕн пăлханса.

Алена шкулта çичĕ класс вĕренсе пĕтерет. Анчах та сывлăх хăй пирки тăтăш аса илтернĕрен пĕлĕве малалла тăсма май килмест. Хĕр ачапа уйрăм программăпа ĕçлеççĕ, психолог калаçусем, тестсем ирттерет. Вăхăт вара малаллах шăвать.

Çапах та вăл пĕртте алă усса лармасть. Алена тăтăшах компьютерпа аппаланать. – Хĕрĕм пĕчченлĕхре пуçа усса ан лартăр, пултарнă таран хăйне малалла аталантартăр тетпĕр, – тет калаçăва хутшăннă май Александр Сергеевич чылай çул хушши тĕп бухгалтер пулса ĕçленĕскер.

Аленăн икĕ аппăшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Муркашри тĕп библиотекăра ĕçлекен Татьяна аппăшĕ вара тĕрлĕ кĕнекесем илсе кайсах тăрать, Аленăна кăсăклантараканни вара унта чылай.

Ир пулсан Волковсен çемйи ĕçе саланать. Алена кил таврашĕнче аппаланать: апат-çимĕç пĕçерет, çулла пулсан пахчара тăрмашать, ытти ĕçе пурнăçлать. Хăйне кăсăклантараканнине вара вăл яланах тупма пултарать. Сăмах хутаççи Аленăн ялан туп-тулли. Ваттипе те, вĕттипе те пуплеме ӳркенмест. Çапла вара вăхăт пĕр шелсĕр малалла чупать, сывлăх тени пĕрмай хăй пирки аса илтерет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Эсир ыйтнăччĕ**

# ИНН документне çĕнĕрен тутарас тесен

***Раççей Федерацийĕнче кашни çыннах налук органĕнче учета илсе ИНН свидетельстви параççĕ. Анчах та асăннă документа ку е вăл сăлтавпа çухатнă тĕслĕхсем те пулмаççĕ мар. Çавна май ИНН свидетельствине çухатсан ăна çĕнĕрен тутарас йĕрке пирки Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн районти пайĕн налук тӳлекенсемпе ĕçлекен, вĕсене регистрацилекен тата учета илекен пайĕн пуçлăхне Е.И. АРСЕНТЬЕВĂНА каласа пама ыйтрăм.***

– Налук тӳлекен юридици вăйĕнчи е уйрăм çын хăйне налук органĕнче учета илнин свидетельствине çухатнă пулсан ăна юридици вăйĕнчи е уйрăм çын пурăнакан вырăнта налук тӳлекенсен пĕрлехи патшалăх реестрĕн правилисен 14-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн параççĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Правительствин 2004 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнчи 110 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ.

Свидетельствăна иккĕмĕш хут илесси тӳлевлĕ. Ăна илме ыйтса çырнă заявленипе пĕрле тӳленине çирĕплетнине ĕнентерекен документ та тăратмалла. Тӳлемелли сумма 200 тенкĕпе танлашать. Асăннă свидетельствăна çийĕнчех илес тетĕр пулсан вара 400 тенкĕ тӳлес пулать.

Правилăсен 12-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн реестрти сведенисене ирĕклĕ формăпа е енсем тунă килĕшĕве кура тăратаççĕ.

Налук тӳлекенĕн çĕнĕ свидетельство илме налук органне ирĕклĕ формăпа çырнă заявлени, тӳленине çирĕплетекен квитанци оригиналне тăратмалла.

Правилăсен 15-мĕш пунктĕнче свидетельствăна памалли вăхăт пирки калани пур. Вăл заявлени панăранпа 5 кунран ытла пулмалла мар. Свидетельствăна çийĕнчех илнĕ чухне ăна заявлени панă хыççăн тепĕр кунне пама тивĕç.

Çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Налук органĕсем учета илнин свидетельствине çухатнин сăлтавĕсене шута илмеççĕ. Çавăнпа та çĕнĕ свидетельствăна тӳлевсĕр пама та сăлтав çук.

Çакна та асăнмалла. Федераллă налук службиналук тӳлекенсем валли çĕнĕ онлайн сервис ĕçе кĕртрĕ. Халĕ вара уйрăм çынсем хăйсен идентификаци номерне пĕлмеççĕ е манса кайнă пулсан Интернет урлă ăна самантрах пĕлме пултараççĕ. Çавна валли Раççей Федераллă налук службин Интернет-сайчĕн (www.nalog.ru) «Узнай ИНН» сервисне кĕмелле, хăвăрăн хушаматпа ята, паспорт е ытти документ – çурални çинчен панă свидетельство даннăйĕсене т. ыт. те кăтартмалла. Компьютер çийĕнчех ИНН номерне кăтартĕ.

Сервис ытти çын пирки те ыйтса пĕлме май парать. Анчах та хуравра ИНН пуррипе çукки пирки пĕлтерни кăна пулĕ. Идентификаци номерне пĕлме вара налук органне пыма тивĕ.

Пачах ИНН çуккисем пирки те манман. Сервиспа усă курса вĕсем электронлă майпа хăйсене учета тăратма заявлени пама пултараççĕ. Ку заявленин регистраци номерĕ пулĕ. Çак регистраци номерĕпе тата паспортпа гражданинăн хăй пурăнакан вырăнти налук инспекцине пымалла. Унта ăна налук учетне тăратнине çирĕплетекен свидетельство парĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ çырса илнĕ.**

# Сăпка юрри юрлама вăхăт пулман...

Аннесен пурнăçĕ – ĕç ветеранĕсен кун-çулĕ



*Лидияпа Валентина аппăшĕпе йăмăкĕ çамрăклăхра ăмсанман диван çинче.*

Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕньял Хуракассинче пурăнакан 74 çулпа пыракан Валя кинемей юр çунине пăхмасăрах урама тухрĕ. Инçетре мар вырнаçнă тăван килте пурăнакан Лидия аппăшĕпе тата ун патĕнче тĕпленнĕ аслă ывăлĕн çемйипе тĕл пулса калаçмасăр Валентина Димитриевнăн чунĕ чăтмасть çав. Юрĕ вара çурĕ те çурĕ...

– Ку юр ирĕлсе кайĕ-ха, – хăй тĕллĕн калаçса илчĕ асанне ĕçпе кушăрханă аллисемпе тӳперен вĕçсе анакан юр пĕрчисене тытса.

Нихăçан та ĕçрен пăрăнман тата хăшĕсем пек çăмăл ĕçшĕн хыпкаланса çӳремен çав вăл. Пĕтĕм пурнăçне ял хуçалăхне халалланă, хăй вăй-халне çеç шаннă. «Свобода» хуçалăхра механизаторта ĕç ĕмĕрне ирттернĕ мăшăрĕпе (Николай Леонтьевич вăхăтсăр çĕре кĕчĕ) туслăн çавăрнă кил-çуртра икĕ ывăлпа хĕр çуратса ӳстернĕ хĕрарăм паян пĕчченех пурăнать. Кил картишне тухсан ĕне пурри, чăх-чĕпсемпе кăвакалсем сас пани, пӳртре апат çиме ларсан вара Лиска кушак çума ларса ачашланни ватă хĕрарăмăн паянхи пурнăçĕн уйрăлми енĕсем. Хушăран ачисемпе мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем килсе пӳрт ăш-чиккине тултарни вара – кинемейĕн чи пысăк телейĕ!

**ĔÇ МАЛТА ТĂНĂ**

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен вĕçĕнче çуралнă çĕршерпиншер ача пекех Лидипе Валя та ашшĕ хӳттине курсах ӳсеймен çав. Димитрий Андреевич Андреев колхоз тимĕрçи пулнăран тата хăйĕн ĕçне юратнăран кĕçĕн хĕрне – Вальăна – хут çине Кузнецова хушаматпа çыртарать. Лидин вара – Димитриева (шкулта Андреева, колхозра Кузнецова пулнă). Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан Çĕньял Хуракассинчи «Пионер» колхозăн тимĕрçи малтанхисемпе пĕрлех фронта тухса каять. Таврăнаймасть унтан вăл, вăрçă çулăмĕнче хыпарсăр çухалать.

– Атте çырнă çырусене анне чĕрçи çине лартса хăйă çутипе йăмăкпа иксĕмĕре куççуль витĕр час-часах вуласа пани паян та куç умĕнче. Атте çырусен кĕтессисене ялан икĕ ача ӳкеретчĕ те «сире тытса ыталăттăмччĕ» тесе çыратчĕ. Çак сăмахсемпе çав ӳкерчĕксем паян та куç умĕнчен каймаççĕ. Анчах, питĕ шел, пурнăç çавăрмакĕнче вĕсем упранса юлаймарĕç, – тет ĕçре сывлăх пирки шутламасăр тимлесе çамрăклах 1-мĕш ушкăн инваличĕ пулса тăнă Лидия кинемей.

Вĕсен шкулта вĕренме те вăхăчĕ пулман. Лидия 4 çул вĕреннĕ те пурнăçне пĕтĕмпех çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă. Унран 2 çул кĕçĕнрех Валя та 4 класс хыççăн шкула кайман...

– Ĕçлемесĕр хырăм тутă пулаймасть, пӳрт те ăшăнмасть. Çапла вара вăрмантан михĕпе вутă йăтаттăмăр, аннене ĕнепе сурăхсем, чăх-чĕппе хур-кăвакал пăхма пулăшаттăмăр. Анне пĕчĕк витрепе аппапа иксĕмĕре черетпе Муркаш пасарне çăмарта сутма яни, укçине пĕр пус юлмиччен налуксем тӳлеме аннене пани нихăçан та асран каяс çук. Пĕррехинче налук вăхăтра тӳлеменнипе агентсем эпир хирте чух килтен сурăх çавăтса тухса кайма тăнă. Кӳршĕсем пĕлтернипе, тăвансем пулăшнипе сурăха та сыхласа хăвартăмăр, налукне те парăма кĕрсе тӳлесе татрăмăр, – куççульне шăлса аса илчĕ Валентина Димитриевна.

Ĕç е вĕренӳ? Çак суйлавра 7 класс пĕтерниĕ хĕрĕн пĕрремĕшĕ тĕп вырăна тухать. Çапла вара Валя уй-хир бригадинче тăрăшма пуçлать. Кĕçех ял хыçĕнчи сурăх ферминче ĕç вырăнĕ тупăннипе хĕр унта вырнаçать, 6 çул кунта вăй хурать.

**ÇЕМЬЕ**

– Çемье епле тата хăçан çавăртăр-ха? – тесе ыйтсан Валя кинемей хуравĕ ансат пулчĕ.

– Хамран 2 çул кĕçĕнрех пулнă мăшăрăм мана 1-мĕш класа кайнă чухнех куç хывни пирки калатчĕ. Хăйсем чухăн пулнине тата эпĕ аслине кура вăл ӳссе каччă пуличченех кун пирки сăмах тапратма шикленнĕ иккен. Вăт çапла вăл пурнăç. Эпĕ сурăх ферминче вăй хунă чух Коля колхоз тракторĕпе ĕçлетчĕ. 1963 çул пуçламăшĕнче хамăр килĕшӳпе çемье çавăртăмăр. Пĕчĕк тăм пӳрте качча килтĕм те тӳрех малашлăх планĕсем йĕркелеме тытăнтăмăр. Хамăр ĕçленĕ укçатенкĕпех пура туянтăмăр, Йăлăма кайса иксĕмĕрех алă пăчкипе 20 кубла метр хăмалăх йывăç касрăмăр. Мăшăр тракторпа ĕçленĕрен хăма çуртарма хĕрарăм пуççăн хам кайрăм. Тĕлпевлĕ ĕçлесе 3 çултан хамăра ятăн пӳрт лартрăмăр. Унчченхи тăм пӳртрен вара, паянхи пек астăватăп, пĕрре кăмака хутмалăх вутă тухрĕ, – пулчĕ тертненушине пайтах курма тивнĕ пулсан та çынлăха çухатман хĕрарăмăн хуравĕ.

«Свобода» хуçалăхра уй-хир бригадинче ĕçлесех «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ В. Васильева паян та ывăлĕсемпе хĕрĕн, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсен пурнăçĕпе интересленсех тăрать, вăй çитнĕ чухлĕ пулăшма тăрăшать.

**СИВВЕ-ĂШША ТИРКЕМЕН**

Авăн уйăхĕнче 75 çул тултарнă Лидия кинемейĕн пурнăçне те пыл та çу тесе хаклаймăн.

– Шкултан таврăнсан пĕчĕкскерсем аннене пулăшмалла йĕтем çине кĕлте йăтма чупаттăмăр. Ăшша пиççсен сивĕ шыв ĕçеттĕмĕр. Ывăнса çитсен çĕр çине выртсах çывăраттăмăр – сывлăх пирки шутлама вăхăт пулман. Çапла вара 10 çултах урасăр пулса лартăм. Анчах çулсем иртнĕ май чир пур тесе сивве-ăшша тиркесе халăхпа тăрса ĕçлессинчен юлман. Ыттисемпе танах тырă выраттăм, кантăр хутса урасем йĕп-йĕпе пуличчен ăна шывран кăларса типĕтнĕ çĕрте ĕçлеттĕм, – аса илӳ çăмхине салтрĕ кинемей.

– Ун чух диван çине выртасси пирки ĕмĕтленмен те. Краççын лампа çутипе пир тĕртеттĕмĕр, алса-чăлха çыхаттăмăр. Пӳртрех пăрусемпе путексем хĕл каçатчĕç. Тимĕр кăмакине те асăрханса çавăнтах хутаттăмăр. Тĕлĕк пек пулсан та – çаплах пулнă çав. Паян вара час-часах 2 çемье пĕр килте пурăнаймастпăр, – иртнине паянхипе танлаштарма тăрăшать калаçăва хутшăнса Валя кинемей. – Ачасем пăхса ларма тӳр килмен пире. Вĕсене минтерсем хушшине лартса хăвараттăмăр та колхоз ĕçне васкаттăмăр. Пирĕнпе вăл вăхăтра колхозра грузчикре вăй хунă амăшĕсем паян хамăр ялта Анна Якимова, Зоя Николаева, Нина Ксенофонтова пурăнаççĕ. Сывлăх пултăрччĕ вĕсене малалли çулсенче.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăнхи вăхăтра та çынсене епле йывăр пулнине Лидия Димитриевнăн çак сăмахĕсем çирĕплетеççĕ:

– Пĕррехинче анне ыйтнипе колхозра 3 килограмм ыраш çырса пачĕç те ăна авăртма армана кайрăм. Çынсем армана урапапа пыраççĕ, эпĕ – пĕчĕк хутаçпа. Малтанхи пек йывăрлăхсем иртнишĕн тавах Тура! Эпир тӳснĕ йывăрлăхсемшĕн çамрăксем телейлĕрех пурăнма тивĕç.

Аслисен шанчăкне тӳрре кăларасси вара пирĕн шăпа тесе аннесемпе сыв пуллашрăм.

**А. ПЕТРОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Районти прокуратурăран

# Суя çăхав хакĕ

**Суеçĕсене саккунпа айăпланă тĕслĕхсем пур-и?**

**В. СТЕПАНОВ.**

***Район прокурорĕн заместителĕ Ю. СЕМЕНОВ хуравлать:***

– Суя çул çине тăракансен хăйсен «ĕçĕ» вĕсен пĕтĕм пурнăç çулне вараласси пирки манмалла мар. Çакăн пек ĕçпе кăçалхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче район сучĕ пулчĕ.

Унччен. Çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче Купăрляра пурăнакан О.В. Николаева хăйĕн килĕнчен палламан çын «Эриссон» телевизор вăрласа кайни пирки районти шалти ĕçсен пайне пĕлтерет. Гражданка «2000 тенкĕлĕх çухату тӳсни» тĕрĕс пулманни, вăл йĕрке хуралçисене юриех суя çулпа уттарни тĕрĕслев вăхăтĕнче палăрчĕ.

Район сучĕ О. Николаевăна саккуна пăсса преступлени пирки суйса пĕлтернĕшĕн РФ УК 306-мĕш статйинче пăхнă преступление тунă тесе палăртрĕ. Ăна 200 сехет ятарласа ĕçлеме приговор кăларчĕ.

# Иерусалимра пулса куртăм

Турра ĕненекенсем валли

***Кăçалхи çурла уйăхĕнче Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ Игнатий атте Турă пулăшнипе инçетри Иерусалимра пулса курчĕ. Унта ирттернĕ кунсем пирки вăл хаçат вулакансене каласа пама килĕшрĕ.***

**– Игнатий атте, каçарăр тӳрĕ ыйтушăн, хăрамарăр-и аякри çула тухса кайма?**

– Мĕнле хăраман пултăр, паллах хăранă. Шухăшла-шухăшла çывăрайми пулнăччĕ. Çав вăхăтчен Иерусалимра пулса куратăп текен шухăш, паллах, пуçăмра та пулман. Пач кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ ку çул çӳрев. Çу уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн патăмăрта Чăваш çĕрĕнчи чиркӳсене пăхса тăракан архиерей – Варнава митрополит – кĕлĕ ирттернĕччĕ. Çавăн чухне мăнастир пуçлăхĕ Василий атте (Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕ 2008 çултанпа Шупашкарти арçынсен мăнастирне пăхăнса тăрать) ăна çапла каланине ăнсăртран илтрĕм: «Паян кунта ир-ирех çитрĕм те çынсемпе калаçма тӳр килчĕ. Игнатий аттепе кăмăлсăр иккен хăшĕ-пĕри…».Архиерей тĕлĕнсе пăхать ун çине – кама юрайман-ха вăл тата?! Эпĕ те, илтес сăмахран хăрасах, хăлхана тăратрăм. «...Питĕ нумай ĕçлет, канма та пĕлмест, чирлесех кайрĕ ĕнтĕ, теççĕ», – сăмахне малалла шутарать Василий атте. «Апла пулсан Иерусалима кайса канса килтĕр!» – пулчĕ Владыкăн пиллĕхĕ.

Тĕрĕссипе унта мана мар, Мăн Сĕнтĕр чиркӳне çӳрекенсене хăйсене, пĕр çын юлмиччен, ямаллаччĕ. Çак икĕ çул хушшинче Турă çуртне илемлетес енĕпе мĕн тунă – ку йăлтах вĕсен вăй-халĕ, ырă кăмăлĕ, çывăрман каçĕсем. Пулăшакансене ятран асăнас тесен хаçатра вырăн çитес çук. Тепĕр енчен çакна тума кирлĕ те мар пулĕ, мĕншĕн тесен Турă Çырăвĕнче çапла каланă: «Хăвăра çынсем мухтанишĕн мар, ятăрсем пĕлĕт çине çырăннишĕн савăнăр». Анчах пурне те, çĕр çине пуç тайса, тав тăватăп. Ырă кăмăлăра кура Сирĕн ĕмĕр ырă курса пурăнмалла пултăр. Ĕненĕр, ку манăн çăвартан кăна мар, чĕререн тухакан сăмахсем.

**– Мĕншĕн урăх çĕре мар, шăпах Иерусалима ячĕç-ха?**

– Калас пулать, Израиль патшалăхĕ ахаль çĕр-шыв мар. Иерусалим та ытти хуласенчен уйрăлса тăрать. Ку вăл Турă хăй суйласа илнĕ вырăн, сăваплă вырăн. Пултару кĕнекинче çапла калани пур: «Ку ахаль вырăн мар, ку – Турă çурчĕ, ку – тӳпе хапхи». Кунта кашни çĕр лаптăкех Библире каланă вырăнсемпе çыхăннă. Çавăнпа та Православи тĕнне ĕненекенсемшĕн кунта пулса курасси тĕп ĕмĕт, пурнăç тĕллевĕ.

**(Малалли çитес номерте).**

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

«Çĕнĕ сăвăсем» ярăмран

# Савăнатăп сирĕнпе

«Суворовсем» ялан малта пулман-и?
Хăвăр ята ялан çӳлте тытман-и?
Аслийĕсем! Асрах-ха Сирĕн ӳсĕм,
Хурçă пекех-мĕн çирĕп сирĕн тӳсĕм.
Вăхăт юххи иртет-çке сисĕнмесĕр:
Ятăрсене ас т(ă)ваççĕ ял-йышсемĕр.
Сирти ĕçченлĕх, сирĕн чун хавалĕ
Çамрăксене вăй парĕ-ха вăл халĕ.
Тамара, Валя, Лида – Ивановăсем,
Ялан пулĕç тĕслĕх сирĕн ятăрсем.
Викторова Вера – Эсир утнă çулĕ
Çамрăксемшĕн чăн та такăрланчĕ халĕ.
Эсир те, Акулина хĕрĕсем,
Эх чипер-çке, эх ĕçчен-çке – пĕлĕрсем.
Сире чунтан хисеп тăвать кашни.
Ку Зоя, Лиза аппасем пирки.
Сăмах тăсам татах та малалла:
Епле пулса эсир ытарайми...
Халь те хитре – хĕр пек яштак. Çурхи
Хĕвел пек ăшăтса кулни – темрен пахи.
Анаткасри кив ферма ĕçченĕсен
Ыр йăлине халь илчĕç çамрăксем.
Виктория Кирилловна пирки
Ăш сăмахсем хăвартăм эп юри.
Эсир вĕт çыхăнтартăр киввине
Çĕннипеле пĕлсе, майлаштарса.
Эсир хурса пуласлăх кĕввине
Чун ăшшипе савса, шайлаштарса.

**Ольга КЛЕМЕНТЬЕВА.**

**Анаткасси ялĕ.**

Объявления

**Постановление главы администрации Шатьмапосинского сельского поселения № 10 от 26 ноября 2010 года**

О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 08 декабря 2010 года в 10 часов 00 минут в здании Шатьмапосинского Дома культуры по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Шатьмапоси, улица Центральная, дом 9.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Проект муниципального правового акта Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний **постановляю:**

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:280201:158, из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д.Торханы, ул.Садовая, разрешенное использование: «для строительства индивидуального гаража» площадью 1400 кв.м. на «для капитального строительства малого гаражного комплекса для сельскохозяйственных машин и тракторов».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 08.12.2010 года до 9-00 часов.

**Постановление главы администрации Тораевского сельского поселения № 10 от 24 ноября 2010 года**

О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Тораевского сельского поселения Моргаушского района **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 08 декабря 2010 года в 10 часов 00 минут в здании администрацииТораевского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, улица Базарная, дом 5.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Проект муниципального правового акта Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельных участков земельного участка с кадастровым номером 21:17:190403:119, из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Анаткасы, ул. Октябрьская, дом 36, общей площадью 42 кв. метров с «для строительства магазина» на «для содержания здания магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта о «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 08.12.2010 года до 9-00 часов.

# Ишеми чирĕ асăрханма ыйтать

## Сывлăх хуралçипе калаçатпăр

***«Сывлăх пулсан ытти пулать», – тетпĕр-ха та, анчах пурнăçра часчасах сăмахпа ĕç пĕр килменни сывлăх хавшани патне илсе çитерет. Тĕнчере çулсеренех чĕрепе юн тымарĕсен чирĕпе 17 миллиона яхăн çын пурнăçран уйрăлать. Çакăн чухлĕ çын сывă пурăннă тата ĕçленĕ пулсан çĕр-шыв экономики татах мĕн чухлĕ хăватлăрах пулнă пулĕччĕ. Кăна эпир çапла шутлатпăр, анчах Раççейре кашни çул чĕре чирĕпе аптăракан 19-20 миллион çынна больницăра ятарлă шута илеççĕ. Чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем хушшинче чи анлă сарăлни вăл – чĕрен ишеми чирĕ. Пирĕн паянхи тĕпелти калаçу шăпах çавăн пирки.***

Чĕрен ишеми чирĕ, стенокарди аталаннă тапхăрта чĕре артерийĕн стенкисене чейникри «накипь» евĕр атеросклероз бляшкисем лараççĕ. Çавна май чĕрен юн тымарĕсем пĕрĕннĕрен чĕре мускулĕсем юнсăрланнипе чĕре тĕпĕнче тата кăкăр шăмми айĕнче хытă ыратма пуçлать. Пирус туртакансен, самăр çынсен, сахăр диабечĕпе аптăракансен, юнра холестерин шайĕ пысăк виçеллисен, юн пусăмĕ пысăккисен, сахал хускалакансен чĕрен ишеми чирĕпе чирлес хăрушлăх уйрăмах пысăк.

Çыннăн чĕре ыратнине туйсанах ĕçлеме, пирус туртма пăрахмалла. Хăвăртрах ларса канмалла, лăпкăн сывлама тăрăшмалла. 3-5 минут иртсен те ыратни лăпланмасан чĕлхе айне нитроглицерин е нитросорбит хумалла. Чĕре тĕлĕнче ыратни 20-30 минута тăсăлсан хăвăртрах тухтăра чĕнмелле, мĕншĕн тесен миокард инфаркчĕ пуçланма пултарать.

Чĕрепе юн тымарĕсен чирĕпе чирлес мар тесен тăтăшах хулçурăм хусканăвĕсем тумалла, пирус туртма пăрахмалла, тĕрĕс апатланассине кун йĕркине кĕртмелле. Çул çӳренĕ чух е ытти çĕрте лайăх кăмăлпа çӳремелле. Талăкра 8-10 сехет çывăрмалла.

Апатланни те пĕлтерĕшлĕ. Яланах çуллă, пăрăçлă, тăварлă апат çини самăртнисĕр пуçне юн тымарĕсен пиçĕлĕхне те пăсать. Çапла вара юн чупасси пăсăлать.

Артерисенче холестерин чăмаккисем ан пулччăр тесен выльăх çăвне çиессине чакармалла: çуллă мар аш, пĕçернĕ е пăшăхланă апат, ытларах пахча çимĕç çимелле. Çакна шута хурса килти хушма хуçалăх аталанăвне йĕркелеме тăрăшмалла.

Юн пусăмĕ пысăк пулсан кофе, çăра чей, эрех-сăра ĕçессине чакармалла е пачах ĕçмелле мар. Çулталăкра пĕр хут та пулин ЭКГ тумалла. Мĕн пуррипе савăнса-киленсе пурăнмалла. Телейлĕ те савăнăçлă çынсем чĕре чирĕпе сайра-хутра кăна чирлеççĕ.

**И. КОРОЛЬКОВА,**
**районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн ертӳçи, кардиолог.**

# Пурте çĕнтерӳçĕсен ретĕнче

## Спорт



Çамрăксене спортпа туслаштарни аслă ăрури çынсем малашлăха пăхниех пулать. Çакна Муркашри физкультурăпа спорт комплексĕнчи бокс секцийĕнче спорт ăсталăхне туптакан çамрăксемпе вĕсен тренерĕсем питĕ лайăх ăнланаççĕ. Куллен майлах тренировкăсем тата час-час иртекен ăмăртусем – пуçланă ĕçсен ӳсĕмĕсем. Чӳк уйăхĕн 19–21-мĕшĕсенче Чул хула облаçĕнчи Кстово хулинче боксра спорт ăсталăхне илме пуçланă çамрăксен облаç кубокĕшĕн уçă турнир иртрĕ. Унта пирĕн районти С. Черкашин аслă тренерпа «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн бокс инструкторĕ М. Николаев ертсе пыракан бокс секцине çӳрекен тĕрлĕ ялсенчи 6 çамрăк хутшăнчĕ. Ăнăçлă ăмăртса Муркаш ен ятне спорт фронтĕнче тепĕр картлашка çӳлелле çĕклерĕç.

– Ял ачисем çавнашкал ӳсĕмсем тунинчен тĕлĕнетпĕр тата вĕсемшĕн савăнатпăр. Кунпа пĕрлех вĕсен спортри çулĕ вăрăм пуласса шанатпăр, – терĕ ачасен черетлĕ тренировки вăхăтĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ А. Куликов.

Çамрăксене вĕсем суйласа илнĕ çул çинче ăсталăх туптама пулăшакансен вара хăйсен вĕренекенĕсем тăвакан кăтартусемпе савăнма сăлтавĕ пур.

Асăннă ăмăртăва хутшăннă 6 арçын ачаран Н. Скворцовпа (60 кг) Д. Ржанов (38 кг) 2-мĕш вырăнсене тивĕçнисĕр пуçне ыттисем – Н. Пигасов (28 кг), И. Налимов (30 кг), Д. Грачев (32 кг), С. Кожевников (48 кг) – пĕрремĕш вырăнсене тухрĕç. Стас Кожевникова 1995–1996 çулсенче çуралнисем хушшинче чи маттур боксер тесе йышăнни те Муркашри бокс шкулĕ аталану çулĕпе пынине çирĕплетет.

Чи нумай призер хатĕрленĕшĕн пирĕн командăн аслă тренерĕ С. Черкашин ăмăрту йĕркелӳçисен Тав çырăвне тивĕçнĕ.

Пирĕн районăн пĕрлештернĕ команди чӳк уйăхĕн 25–26-мĕшĕсенче Çармăс Республикин турнирне хутшăннă. Атăлçи тăрăхĕнчи тĕрлĕ хуласенчен пынă 150 боксер хушшинче Чăваш Ен ятне хӳтĕленĕ пирĕн командăра 8 боксер пулнă. Пĕрлештернĕ команда тенĕрен. Юлашки çулсенче бокс кĕрешĕвне Муркашри, Калайкассинчи, Чуманкассинчи, Орининти вăтам шкулсенче пĕлӳ пухакансем активлă хутшăнаççĕ. Ку хутĕнче те ăмăтруран О. Сютруковпа С. Черкашин (кĕçĕнни) тренерсем ертсе пынă пирĕн команда çитĕнӳсемпе таврăнчĕ. Хастар кĕрешӳре Д. Грачев (Калайкасси шкулĕ), И. Налимов (Муркаш), Р. Николаев (Калайкасси), Д. Ржанов (Чуманкасси) 1-мĕш вырăнсем, С. Пугачев (Муркаш), А. Кожевников (Оринин), Г. Балканов (Калайкасси) 2-мĕш вырăнсем йышăнчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

## Объявления

**3 декабря с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 3-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-10.**

сохраним и преумножим ваши
**СБЕРЕЖЕНИЯ**
под достойные проценты
**ЗАЙМЫ:** на неотложные нужды "до ПОЛУЧКИ"
с использованием материнского капитала
новые более выгодные процентные ставки
узнайте больше:
с. Моргауши, ул. Чапаева 44а/2, тел. 6-23-10, 37-48-92
Кредитный потребительский КАПИТАЛ кооператив граждан
работаем с пайщиками

**Срочно покупаем двух или трехкомнатную квартиру в центре с. Моргауши с индивидуальным отоплением. Тел.: 8-905-346-52-88.**

* * *

**Стройматериалы с доставкой: кирпич керамический, одинарный, полуторный, двойной; кирпич силикатный любых цветов; блоки керамзитобетонные, газосиликатные; пеноблоки, фундаментные блоки; кольца колодезные, трубы асбестоцементные, цемент, шифер, профнастил, металлочерепица и другие стройматериалы. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483. 9-9.**

**КИРПИЧ**
более 500 видов и цветов
**Газосиликатные блоки**
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
ТК “ТЕРМИНАЛ”
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12

* * *

**В д. Шатьмапоси открылся швейный цех, работаем с 8-00 ч. до 17-00 ч. без выходных. Тел.: 8-927-863-76-30. Ремонт стиральных машин-автоматов с вызовом на дом.**
**Тел.: 8-953-010-21-34.**

* * *

**Иккĕмĕш пăруламалли ĕне сутатпăр, хурапа шурă тĕслĕ, апрель уйăхĕнче пăрулать.**
**Тел.: 8-927-849-24-73.**

# Тав тăватпăр

Пирĕн чи çывăх çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçа – Юнкă ялĕнче пурăннă Юрий Алексеевич Иштонова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак пысăк хуйхăна пайланăшăн район администрацине, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, тăвансене, ял-йыша, юлташсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Иштоновсен тата Тарасовсен çемйисем.**

Савнă мăшăра, аттене – Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра мĕн çар службинчен килнĕренпех, 22 çул хушши трактористра вăй хунă Николай Витальевич Ивашкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн хуйхăна пĕрле пайланăшăн, ăна хисеплесе ăсатма пынăшăн хуçалăх специалисчĕсене, тус-юлташĕсене, шкулпа сад коллективĕсене, тăвансене, ял-йыша, пускилсене тав тăватпăр.

**Ивашкинсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ВНИМАНИЕ!!!**
**Красное пальмовое масло «ЗЛАТА ПАЛЬМА»**
**теперь можно заказать и приобрести по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, 2 этаж.**
**Тел.: 8-953-017-00-69.**
**Заказ доставляется в течение суток. 1-5.**

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-5.**

* * *

**Сварочные работы: ворота гаражные, калитки, ворота приусадебные, палисадники из металла, профнастила, печи банные продаем и изготовим на заказ.**
**Тел.: 38-51-75, 8-927-66-85-175. 9-9.**

***

**Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории СПК «Оринино» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, в северной части кадастрового квартала 21:17:101601.**

**Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Волков Николай Викентьевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Синьял-Оринино. Паспорт серии 9700 № 163179 выдан Моргаушским РОВД ЧР от 08.01.2001 г.; гр. Иванова Евдокия Константиновна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Синьял-Оринино. Паспорт серии 9702 № 624286 выдан Моргаушским РОВД ЧР от 28.08.2002 г.**

**Согласование местоположения границ состоится 03.01.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 офис ООО «Земля» с 8 до 17 часов.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, офис ООО «Земля».**

***

**Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории СПК «Оринино» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, в северной части кадастрового квартала 21:17:101601.**

**Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Курбанов Владимир Петрович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Синьял-Оринино. Паспорт серии 9710 № 854975 выдан ТП УФМС России по ЧР в Моргаушском районе от 17.11.2010 г.; гр. Курбанова Таисия Давыдовна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Синьял-Оринино. Паспорт серии 9700 № 206454 выдан Моргаушским РОВД ЧР от 29.03.2001 г.; гр. Курбанова Валентина Захаровна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Чамыши. Паспорт серии 9700 № 206833 выдан Моргаушским РОВД ЧР от 06.04.2001 г.**

**Согласование местоположения границ состоится 03.01.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 офис ООО «Земля» с 8 до 17 часов.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, офис ООО «Земля».**

***

**Я, собственник земельной доли Кудряшов Лев Александрович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 12800 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование начальнику отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления администрации Моргаушского района Тарасовой Л.Ю., ее родным и близким по поводу кончины отца
**ИШТОНОВА**
**Юрия Алексеевича.**

Райхаçат редакцийĕн коллективĕ район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен пайĕн ертӳçин Л.Ю. Тарасовăн ашшĕ
**Юрий Алексеевич**
**ИШТОНОВ**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе, тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет и правление Моргаушского райпо искренне скорбят и выражают глубокое соболезнование семье, родным и близким начальнику отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления Тарасовой Л.Ю. по поводу большой утраты – смерти отца
**ИШТОНОВА**
**Юрия Алексеевича.**

Муркаш райпо коллективĕ Çĕмĕртлĕх Чемей магазинĕнче сутуçă пулса ĕçлекен Н.В. Ермолаевăн
**ХУНЬСТАРИКĔ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕтĕм чун-чĕререн тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ çак шкулта ĕçленĕ
**Николай Александрович**
**ТИМАКОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Ответлă секретарь В.Л. Шапошников.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Илларионова Р.А.
Пичете панă 30.11.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4057.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.